Йĕпреҫ районĕн хаҫачĕ

# ҪĔНТЕРӲШĔН

Шăматкун
2007 юпа, 27

86 /9003/№

Хаҫат 1932 ҫултанпа
тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

## ЫРАН — АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ĔҪЧЕНĔСЕН КУНĔ

### АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси уявĕ ячĕпе саламлатăп!

Паян эпир хамăр пурнăҫа автотранспорт комплексĕсĕр чухлама та пултараймастпăр, Чăваш Республикин социаллă-экономикăллă аталанăвне ҫак отрасль хывакан тӳпене сăмахпа виҫсе хаклама та йывăр. Эсир хăвăр ĕҫе ывăнма пĕлмесĕр пурнăҫланипех транспорт артерийĕ пĕр чарăнми ĕҫлет, ун тăрăх халăха, грузсене турттараҫҫĕ, Чăваш Енри предприятисен республика тулашĕнчи облаҫсемпе, ытти регионсемпе, ют ҫĕршывсемпе ҫыхăнса ĕҫлесси вăйланать.

Республикăра автомобилизаци хăвăрттăн аталанать: юлашки 10 ҫул хушшинче кăна уйрăм граждансен аллинчи автомашинăсен йышĕ 10 хут ӳсрĕ. Пĕр енчен илсен, ҫакă халăхăн тивлетлĕхĕ ӳснине пĕлтерет. Тепĕр енчен, влаҫ органĕсенчисене хăйсен умне ҫĕнĕ задачăсем лартма хистет. Чăваш Ен 2008 ҫул тĕлне мĕнпур ялсене автомобиль ҫулĕсемпе ҫыхăнтарнă Раҫҫейри пĕртен-пĕр регион пулса тăрĕ. Ҫак тĕллев пурнăҫлансан инҫетри ялсене те общество транспорчĕ ҫӳрекен ҫĕнĕ маршрутсем уҫăлĕҫ, татах та нумайрах вĕренекен ачасем «Шкул автобусĕсемпе» ҫӳреме пуҫлĕҫ. Чăваш Енре ҫитес икĕ ҫул хушшинче хулари транспорт инфраструктурине ҫĕнетес ĕҫсене пурнăҫламалла, ҫак ҫĕнелĕх XXI-мĕш ĕмĕр ыйтăвĕсене туллин тивĕҫтерĕ тата ҫулҫӳрев палăрмаллах лайăхланĕ.

Сирĕн ĕҫ хăрушлăхпа ҫыхăннă, эсир пассажирсен тата ҫуран ҫынсен сывлăхĕпе пурнăҫĕшĕн пысăк яваплăх тытатăр. Сирĕн пысăк профессионализм тата асăрхануллăх ҫул ҫинчи инкексенчен пăрăнма, ĕҫре ăнăҫусем тума май паракан ҫирĕп никĕс пулса тăрать.

Пĕтĕм чун-чĕререн сире аварисемсĕр ĕҫлеме ҫирĕп сывлăх, лайăх кăмăл-туйăм сунатăп. Сире телейĕ ҫул тата сирĕн ҫемйĕрсенче ихсĕлми тивлет пултăр!

*Чăваш Республикин Президенчĕ*
***Н. ФЕДОРОВ.***

### АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси уявĕ – Автомобиль транспорчĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Автомобиль транспорчĕн шанчăклă ĕҫĕ ҫынсен пурнăҫне хăтлăхлатать тата ҫăмăллатать, предприятисене, организацисене тата хуҫалăхсене эффективлă ĕҫлесе пыма пулăшать. Паян районта транспорт пулăшăвĕсен рынокĕ аталанса пырать: пассажирсем тата грузсен турттармалли калăпăшсем пысăкланаҫҫĕ. Район территорийĕнче ҫуллен ҫул асфальт сарнă ҫулсен тăршшĕ тата автобус маршрутĕсем ӳсеҫҫĕ.

Хальхи условисенче отрасль ĕҫченĕсен ĕҫе йĕркелес ĕҫĕн ҫĕнĕ меслечĕсене активлăн ĕҫе кĕртессишĕн, экологи хăрушсăрлăхĕпе тивĕҫтерессишĕн, пулăшу ĕҫĕсен пахалăхне пĕрехмай лайăхлатассишĕн пысăк тимлĕх уйăрмалла.

Сире районăн социаллă пурнăҫпа экономика аталанăвне тӳпе хывнăшăн, профессионализмшăн, тӳрĕ кăмăллă ĕҫшĕн, ĕҫе парăннăшăн тав сăмахĕ калатăп. Сире тата сирĕн ҫывăх ҫыннăрсене ҫирĕп сывлăх, ҫулсем ҫинче ăнăҫу, телейпе тăнăҫлăх сунатăп.

*Йĕпреҫ районĕн пуҫлăхĕ*
***А. ПЕТРОВ.***

### ЫРЛĂХ-СЫВЛĂХ, ТАКĂР ҪУЛ СУНАТПĂР!

Ыран – автомобиль транспорчĕн ĕҫченĕсен кунĕ. Ҫак уява пирĕн районта та ҫĕршер-ҫĕршер ҫын чăтăмсăррăн кĕтет. Водитель ĕҫĕ кăткăс та, хăрушă та, кăсăклă та. Ҫĕршыв экономикин аталанăвне, ҫавна май уйрăм ҫемье аталанăвне те, автомобиль транспорчĕсĕр пурнăҫлама май килмест. Куллен черетлĕ рейса тухакансем транспорт хатĕрĕн рулĕ умĕнче ҫирĕп дисциплинăллă пулни, ҫул ҫинче пурне те хисеплени хăрушсăр ҫулҫӳрев йĕркелеме май парать. Водительсен ытларах пайĕ ҫав йыша кĕрет. Шел пулин те, ҫул-йĕр правилисене пăхăнманнисем, руль умĕнче хăйсене каппайчăклă тытакансем, пуҫтахланакансем те тĕл пулаҫҫĕ хушăран. Вĕсемпе эпир, ҫул ҫӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕнче ĕҫлекенсем, ҫине тăрса кĕрешетпĕр. Ку яваплă ĕҫре пире пулăшаканĕсем ялан юнашар пулни хавхалантарса пырать. Камсем-ши вĕсем? Хуравĕ пĕрре: ҫул ҫинчи дисциплинăна тытса пыраканĕсем, аппа пулсан эсир – ахаль водительсем! Ҫул-йĕр хăрушсăрлăхĕшĕн пăшăрханса ҫула тухакан кашни водителе професси уявĕ ячĕпе чунтан саламлатпăр. Сирĕн умра яланах такăр ҫул вырттăр, килте чăтăмсăррăн кĕтекен тăванăрсене, мăшăрсене, ачăр-пăчăра рейсран куллен ырă-сыва, тĕрĕс-тĕкел таврăнса савăнтарăр.

***В. АНДРЕЕВ,***
*ҪҪХПИ районти уйрăмĕн пуҫлăхĕ.*



**Чăваш Ҫармăс ялĕ, районти халăх пурăнакан ытти пунктсемпе танлаштарсан, Йĕпреҫрен аякра вăрман тăрăхĕнче вырнаҫнă. Ҫак ялта урамсем тăрăх иртсе ҫӳреме нихҫан та йĕркеллĕ ҫул пулман: техника ҫĕмĕрсе пĕтернĕ, ҫуркунне-кĕркунне ураран атă хывман. Чăвашҫармăссем темиҫе ҫул каялла кăна-ха хăйсен ялне асфальт сарнă ҫул ҫитесси пирки ĕмĕтленме те пултарайман. Иртнĕ ҫулта Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров автомобиль ҫулĕсене тăвассине хăвăрт вĕҫлес енĕпе пурнăҫламалли мерăсем ҫинчен Указ кăларсан тин вăрман тăрăхĕнчи халăхăн шанăҫ ҫуралнă. Ҫав вăхăтрах «пирĕн пек ялсене чи кайран кăна ҫул хываҫҫĕ» текенсем те пулнă.**

# ЧĂВАШПА ИРҪЕ ЯЛĔСЕНЕ ҪЫХĂНТАРАКАН ҪУЛ

Юпа уйăхĕн 24-мĕшĕ Ирҫе Ҫармăс ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ событипе ҫырăнса юлчĕ. Кунта савăнăҫлă лару-тăрура ирҫе тата чăваш ялĕсене ҫыхăнтаракан Ирҫе Ҫармăс – Чăваш Ҫармăс автоҫула уҫрĕҫ. Ҫĕнĕ асфальтлă ҫулăн тăршшĕ – 2 ҫухрăма яхăн. Ăна палăртнă вăхăтра хута ярассишĕн Йĕпреҫри ҫул-йĕр управленийĕн ĕҫченĕсем ырми-канми вăй хунă.

Вырăнти халăх икĕ ял чиккĕленекен вырăнта – Светтуй Троица чиркĕвĕ ҫывăхĕнче Пичине юханшыв урлă хывнă ҫĕнĕ кĕпер тĕлĕнче йышлă пухăнчĕ. Унтах уйрăм предпринимательсем суту-илӳ тăваҫҫĕ. Акă уява чăтăмсăррăн кĕтнĕ пысăк хăнасем

*(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).*

## ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Районта социаллă объектсем тунă ҫĕрте тăрăшса ĕҫленĕшĕн, хăйĕн сумлă тӳпине хывнăшăн тата Автомобиль транспорчĕн ĕҫченĕсен кунĕ ячĕпе «Прогресс» хупă акционерлă обществăн автокранĕн машинистне **Борис Федорович МАРКОВА** Йĕпреҫ районĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

х х х

Халăхăн транспортпа ҫул ҫӳрев ыйтăвĕсене тивĕҫтерес ĕҫре тӳрĕ кăмăлпа ĕҫленĕшĕн тата Автомобиль транспорчĕн ĕҫченĕсен кунĕ ячĕпе Чăваш Республикинчи «Чăвашавтотранс» патшалăх унитари предприятийĕн филиалĕн Канашри пассажирсем турттаракан автотранспорт предприятийĕн автобус ҫӳретекен 2-мĕш класслă водительне **Владимир Анатольевич ШАРАМЕТОВА** Йĕпреҫ районĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

х х х

Ҫул-йĕр строительствинче чылай ҫул тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕҫленĕшĕн Чăваш Республикинчи «Чăвашавтодор» патшалăх унитарлă предприятин Йĕпреҫри ҫул-йĕр, юсавпа строительство управленийĕн ҫак ĕҫченĕсене районăн Хисеп грамотипе наградăланă:

**Анатолий Федорович АШАНИНА** – бульдозер машинистне;
**Петр Иванович МИХАЙЛОВА** – автомобиль водительне;
**Ирина Юрьевна УТКИНАНА** – ҫул-йĕр рабочине.

## ВНИМАНИЕ: КОНКУРС

### АДМИНИСТРАЦИЯ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА

**проводит конкурс на замещение должности директора физкультурно-оздоровительного комплекса.**

**Предъявляемые требования к участнику конкурса: высшее физкультурное образование или высшее образование с опытом работы руководителем, организатором не менее 3-х лет.**

**Заявления принимаются в приемной главы администрации района до 5 ноября 2007 года включительно по адресу: п. Ибреси, ул. Маресьева, д. 49. Тел.: 2-12-18.**

## О жеребьевке печатной площади для публикации в газете «Ҫĕнтерӳшĕн» («За победу»)

В соответствии с Федеральным законом от 18 мая 2005 г. №51-ФЗ «О выборах депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации» РГУ «Редакция Ибресинской районной газеты «Ҫĕнтерӳшĕн» («За победу») 30 октября 2007 года в 14 часов проводит жеребьевку печатной площади для бесплатной и платной публикации предвыборных агитационных материалов в газете «Ҫĕнтерӳшĕн» («За победу») по адресу: п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6, 2 этаж, кабинет гл. редактора.

Для участия в жеребьевке приглашаются уполномоченные представители региональных отделений политических партий, зарегистрированных в Чувашской Республике. Полномочия участников жеребьевки должны быть обязательно подтверждены документально.

Условием для участия в жеребьевке печатной площади на платной основе является письменная заявка, представленная в редакцию райгазеты до 14 часов 30 октября.

По результатам жеребьевки РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «Ҫĕнтерӳшĕн» («За победу») заключает с региональными отделениями политических партий договоры на размещение предвыборных агитационных материалов.

Телефоны: 2-11-92, 89278408900.




НИ
КОМПЬЮ
СУПЕРМ

п. Ибреси,
ул. Садовая, д. 7
/Дом быта/,
2 этаж, телефон:
2-22-62.
КРЕДИТ
www.nix.ru

ПОДАРОК - ПРИ ПОКУПКЕ КОМПЬЮТЕРА

# ПОСТАНОВЛЕНИЕ главы Ибресинского района

## О ВНЕСЕНИИ ИЗМЕНЕНИЙ В ПОСТАНОВЛЕНИЕ ГЛАВЫ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА ОТ 23.10.2007 № 599 «ОБ ОБРАЗОВАНИИ ИЗБИРАТЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ ПО ВЫБОРАМ ДЕПУТАТОВ ГОСУДАРСТВЕННОЙ ДУМЫ ФЕДЕРАЛЬНОГО СОБРАНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ»

В соответствии с требованиями обеспечения пожарной безопасности центров избирательных участков, **постановляю**:

Внести следующие изменения в постановление главы Ибресинского района от 03.10.2007 №599 «Об образовании избирательных участков по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации»:

**Ибресинский избирательный участок № 202**

После слова «центр» слова «бильярдная ООО фирма ДиК» исключить и принять в редакции «Ибресинская средняя общеобразовательная школа № 2;

**Айбечский избирательный участок № 204**

После слова «центр» слова «Айбечский сельский Дом культуры» исключить и принять в редакции «Айбечская средняя общеобразовательная школа»;

**Березовский избирательный участок № 207**

После слова «центр» слова «администрация Березовского сельского поселения» исключить и принять в редакции «Березовская средняя общеобразовательная школа»;

**Новочурашевский избирательный участок № 216**

После слова «центр» слова «Новочурашевский сельский Дом культуры» исключить и принять в редакции «Новочурашевская средняя общеобразовательная школа»;

**Верхнекляшевский избирательный участок № 223**

После слова «центр» слова «Верхнекляшевская начальная школа» исключить и принять в редакции «Верхнекляшевский сельский клуб».

**Глава Ибресинского района**
**А. И. ПЕТРОВ.**

п. Ибреси, 23 октября 2007 г., №657.

# ЧĂВАШПА ИРÇЕ ЯЛĔСЕНЕ ÇЫХĂНТАРАКАН ÇУЛ

***(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)***

те çитрĕç. Вĕсене вырăс, чăваш тата ирçе халăхĕн тумĕсене тăхăннă пикесем çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç. Унтан таврана темиçе чĕлхепе юрă-кĕвĕ саланчĕ.

Кĕтнĕ самант. РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинчи ĕçсен комитечĕн председателĕ Константин Косачев, район пуçлăхĕ Анатолий Петров, Ирçе Çармăс ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Карсаков тата Йĕпреçри çул-йĕр управленийĕн пуçлăхĕ Вячеслав Козлов ***(ӲКЕРЧĔКРЕ, 1 стр.)*** урлă карнă йăмхĕрлĕ хăюна касса çĕнĕ автоçула уçрĕç. Унтан Леонид атте Чăваш Çармăс еннелле тăсăлакан типтикĕс çула сăвапларĕ.

– Тинех Чăваш Çармăс çыннисене нумай çул канăççăрлантарнă проблемăна татса пама пултартăмăр. Çак ялпа çыхăнтарнă çĕнĕ çул пирĕн Президентăн Николай Федоровăн Указĕ çирĕппĕн пурнăçа кĕрсе пыни çинчен тепĕр хут çирĕплетрĕ, – терĕ район пуçлăхĕ Анатолий Петров савăнăçлă митингра.

Юлашки çулсенче кăна ку тăрăхра пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕн офисне, тĕслĕхлĕ библиотека уçнă, ял çыннисем çутçанталăк газĕпе усă кураççĕ, Липовка поселокне асфальтлă çулпа çыхăнтарнă. Çаксем пурте – район центрĕнчен аякри ялпоселоксенче те пурнăç лайăхланса пынине çирĕплетекен тĕслĕхсем.

Савăнăçлă митинга пухăннă халăха ял уявĕ ячĕпе РФ Патшалăх Думин депутачĕ Константин Косачев саламларĕ.

– Çак çул храм патне, ырлăх патне, килĕшӳ патне илсе пырать, ял çыннин социаллă ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнĕ, – терĕ Константин Иосифович. Вăл çĕршывăн юлашки вăхăтри ырă улшăнăвĕсем, малашнехи тĕллевĕсем пирки чарăнса тăчĕ. Уйрăмах «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ ял аталанăвĕнче ырă йĕр хăварасса шанма кирлине палăртса хăварчĕ.

– Путин планĕсем – çĕршывăн нумай çул маларахри аталану стратегийĕ. Çакă ялта çĕнĕ çулсем, шкулсем, офиссем, садиксем, спортпа сывлăха çирĕплетмелли комплекссем хушăнсах пырассипе тачă çыхăннă, – терĕ сумлă хăна.

Йĕпреçри çул-йĕр управленийĕн директорĕ Вячеслав Козлов районта çул-йĕр тăвас ĕç анлăн сарăлнине палăртрĕ. Вĕсен тăрăшулăхĕпе кăçал район территорийĕнчи 9 яла çĕнĕ çулпа çыхăнтарнă, йĕпреçсем кунсăр пуçне кӳршĕллĕ Улатăр районĕнче те çул-йĕр сараççĕ.

Митингра тухса каласнă ял çыннисем çĕршыв, республика пуçлăхĕсене, Патшалăх Думине ял çыннисен пурнăçне лайăхлатасси çине пысăк тимлĕх уйăрнăшăн чĕререн тав турĕç.

– Ял халăхĕ, астăватăр-и, шыв-шур вăхăтĕнче Комсомол урамĕпе тракторпа аран-аран тухаттăмăрччĕ, атта урараn хывман. Паян çак çул Çамрăксен урамĕпе те çыхăнтарчĕ. Çак çул пирĕншĕн пурнăç çулĕ пулса тăрĕ, – мăнаçланса калаçрĕ район Пухăвĕн депутачĕ, чылай çул колхоз ертӳçи тата ял администрацийĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Анатолий Волков. Ирçе Çармăс ялĕнчи чи хисеплĕ вăрçăпа ĕç ветеранĕн, 85 çулхи Константин Родионовăн сăмахне ял халăхĕ тăвăллăн алă çупса йышăнчĕ.

«Липовка» ООО директорĕ Александр Мамуткин Раççей геройĕ Леонид Константинов çуралса ӳснĕ урама асфальт çул сарас ыйтупа Патшалăх Думин депутатĕнчен пулăшу ыйтрĕ.

Митинга пухăннă çынсене хавхалантарма Йĕпреçрен культура ĕçченĕсен ушкăнĕ тата ялти М. Евсевьев ячĕллĕ вăтам шкулта вĕренекен хĕрсен ансамблĕ концертпа килнĕ. Юрă-кĕвĕ шăранма пуçласан çĕнĕ çулшăн савăннă Чăваш Çармăсри хĕр-арăмсем ***(ӲКЕРЧĔКРЕ куратăр)*** асфальт çинче ташша яра пачĕç. Константин Косачевпа Анатолий Петров вĕсен савăнăçне пĕрле пайласа тăвăллăн алă çупрĕç...

Çак кун Йĕпреç районне ĕçлĕ çӳревпе виççĕмĕш хут килнĕ РФ Патшалăх Думин депутачĕ Константин Косачев тата район пуçлăхĕ Анатолий Петров район центрĕнче çĕкленекен физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплексра пулса строительсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç. Унтан вĕсем районти активпа тĕл пулчĕç. Константин Иосифович Раççей Федерацийĕн Правительствин, Патшалăх Думин тĕллевлĕ ĕçĕхĕлĕ çинчен чарăнса тăчĕ, ыйтусене хуравларĕ.

Çак кунах К. Косачев Вăрнар районĕнче пулнă.

***К. ДМИТРИЕВ.***
***Д. ДИМИТРИЕВ***
***сăнӳкерчĕкĕсем.***



## САНĂН ÇЫННУСЕМ, РАЙОН



**Нумай çул иртрĕ унтанпа. Август уйăхĕ. Çамрăк, сăнĕпе илемлĕ, кăмăллă хĕр пырать. «Кавказская пленница» кинори пек: комсомолка, спортсменка, студентка, çӳçне 70-мĕш çулсенче модăра пулнă «Гаврош» прическа кастарнă çав тери хӳхĕм хĕр. Вăл тĕттĕм вăрман тăрăх çуран утать, машина та, автобус та кирлĕ мар. Утмалăх пур-ха, яла çитме 12 çухрăм, тен, ытларах та. Алра йывăр чăматан, унта ытти япаласем хушшинче Канаш училищине 1967 çулта пĕтернине çирĕплетекен диплом та.**

# МАНДОЛИНА САССИПЛĔ ЮРРĂМ

Пĕчченех утать вăл, нимĕн те хăратмасть ăна. Вĕçсе кайма ĕлкĕреймен кураксен сасси те, хальлĕхе курăнман ял та, ăна унта мĕн кĕтни те шиклентермест. Вăл çамрăк, 19 кăна! Çамрăклăх вăйхал парать, юн вылять, чĕре хавассăн тапать, романтика илĕртет. Утнă май вăл юрласа ярать, пӳрнисем хулран çакса янă мандолина чĕлĕхĕсене сĕртĕне-сĕртĕне илеççĕ.

Чăматанĕ йăлăхтарса та çитерчĕ, чылай йывăрланчĕ, мур. Акă ял курăнса кайрĕ, вăрманĕ хыçа юлчĕ, ку вăл Пысăк Упакасси. Çакăнта çитмелле-ха. Илемлĕ Еленăн чĕри тӳнк! тӳнк! тăвать. Мĕнле хумханмăнха, ют ял вĕт! Мĕн кĕтетши пуçăма?

Паянхи юмахри сăнарăн ячĕ пур – Елена Васильевна Петрова (хĕр чухнехи хушамачĕ Кириллова). Хăйĕн пурнăç çулне вăл Пысăк Упакасси шкулĕнче, музыка тата пуçламăш классен учителĕ пулса кӳлĕннĕ. Шкул директорĕ Елена Андреевна Димитриева алăк уçса кĕртнĕ ăна: «Чăн малтанах шкулта музыка учителĕ пулма лекет сирĕн, эсир çакна ăнланатăр-и? Концертсем, тĕрлĕрен мероприятисем хатĕрлесе халăх умне тухма тивет. Мандолинăпа вылятăр-и? – унăн куçĕсем инструмента тĕллерĕç, – питĕ аван, апла пулсан пурте лайăх пулĕ». Хăрамалла, ыран тата мĕн пулĕ?

Ыран та тата учительте ĕçленĕ пур çулсенче те юнашар яланах талантлă та ырă кăмăллă учительсем пулчĕç: Мария Сидоровна, Мария Димитриевна, Анна Романовна, Клавдия Петровна, Евдокия Ивановна... Аса илсе пĕтерме май пур-ши? Вĕсем ырă канашпа та, ĕçпе те, çав вăхăхтрах вăрттăн хĕр чĕринче мĕн пулса иртнипе те кăсăкланнă. Ара, кĕçех пĕрремĕш отчетлă концерт, вăл ялти клубра мар, Йĕпреçре иртмелле. Кунне те палăртнă: 20-мĕш сентябрь, 1967 çул. Геннадий Кузьмич Ермолаев клуб директорĕпе пур номерсене те пăхса тухнă ĕнтĕ, хатĕрленĕ, анчах çавах шухăшлаттарать, темле пулса тухĕ-ха юрланă чухне. Пурте лайăх пулчĕ, оккей! Пĕрремĕш çĕнтерӳ пурне те çул уçма питĕ пулăшать. Елена Васильевнăшăн та ку илемлĕх тĕнчине çирĕппĕн ярса пуснине пĕлтерчĕ. Юрă хыççăн юрă, ташă хыççăн ташă, сценка хыççăн сценка зала парăнтарчĕ, халăх тата шкул ачисен хисепне çĕнсе илчĕ, кунсăр пуçне çирĕп юрату та. Анатолий Петров, çав вăхăтра клубра ĕçлекенскер, канăçне пачах çухатрĕ. Çамрăк хĕр хыççăн вăл нумай чупрĕ, юлашкинчен унăн чĕрине парăнтарчĕ парăнтарчех. 1973 çулта пĕрлешрĕç вĕсем. Туслă çемьере Татьяна, Наталья, Лариса çуралчĕç. Вĕсем ĕнтĕ тахçанах çитĕннĕ, хитре хĕрсем хăйсене турă пӳрнине те тĕл пулнă, пурнăç çулне те такăрлатнă. Татьяна – акăлчан чĕлхи учителĕ, хальхи вăхăтра Бельгинче пурăнать, ĕçлет. Вăл Франци, Кипр, Германи, Голланди çĕрĕсене парăнтарнă та ĕнтĕ, ытти вырăнсенче пулса курма ĕмĕтленет (чĕлхе таçта та çитерет!), Наталья, аякри Тюмень облаçĕнче пурăнать, кĕçĕн классене вĕрентет, çак кунсене Макар-маршал ывăлне халаллать. Упăшкипе пĕрле «çĕпĕр хĕрĕ» ывăлне Çĕпĕрти пек сывлăх, Кавказри пек вăрăм кунçул, чăваш пек ĕçчен, вырăс пек паттăр пулма ăс парать. Лариса кооператив институтĕнче вĕренет, çав вăхăтрах вăл – тĕп хулара пĕр паллă фирма-магазин хуçи. Ашшĕпе амăшĕ пекех ачисем те юрлама та, ташлама та маттур. Пĕр вунă çул каялла Пысăк Упакассинче вожатăй пулса ĕçленĕ Наталья Анатольевна «Шалунья» ташă ушкăнĕпе мухтава тухнăччĕ.

***– Елена Васильевна, ăçтан вара эсир çапласкер? Ачалăх, аçу-аннӳ?***

Унăн сăнĕ çуталса кайрĕ, куççулĕ те тухнă пек туйăнчĕ. Ара, тахçанхине, ĕлĕкхине хускатма лекрĕ вĕт.

– Ачалăхăм манăн çĕмĕртлĕ, хурăн тата хăмла çырлиллĕ, мăйăрлă. Вăрманта ӳснĕ эпĕ. Аттепе анне Василий Кирилловичпа Анастасия Александровна Кирилловсем Эконом поселокне, сĕм вăрмана, 1939 çулта Çĕрпӳ районĕнчен куçса килнĕ. Йывăç хăртса пӳрт лартнă, çĕр тунă, пыл-хурт тытнă. Мана яланах пыл-хурт ушкăнне сыхлама яратчĕç, хăйсем Çĕмĕрле патне çитиех утă çулма кайнă. Хĕлле вара (кулать) эпĕ миçе кашăк хуçман-ши, пылпа киленеттĕм е юлташсене хăналаттăм. Аннерен пайтах лекнĕ. Мăйăрне шĕкĕлчесе 4-5 михĕ хатĕрлеттĕмĕр. Витамин нумай çинĕ çав эпĕ, 40 çул ĕçлесе те эпĕ гриппа та чирлемен, пĕрре те больничнăйпа пулман. Спотарти 8 çул вĕренмелли шкулта вĕреннĕ, унта çуран çӳренĕ. Унтан училище, каллех шкул. Пĕрремĕш класа нихăçан та манмастăп. 28-ăнччĕ вĕсем, куçран пăхатчĕç. Халĕ Борис Елдырев, Борис Игнатьев, Галя Ярчеева, ыттисем те – манăн туссем. Эпĕ мандолинăпа калаттăм, вĕсем юрлатчĕç.

Ӳссен хăшĕ яла юлĕ,
Хăшне йышăнчĕ хула.
Пурпĕр пулăпăр пит туслă
Эпĕ, Павăл, Микула...

Шкул ачисем пурте мандолинăна йăтса курасшăнччĕ, эпĕ урокран тухасса сыхлатчĕç, кĕтетчĕç...

Çапла, ман умра пысăк авторитетлă çын, вăл ăна хăйĕн кăмăлĕпе, тĕрĕслĕхĕпе, ĕçĕпе çĕнсе илнĕ. Шкулта 17 çул ĕçленĕ хыççăн пач урăх çĕре çитернĕ шăпа – влаç органĕсене. 1996-2006 çулсенче вара Елена Васильевна шăп 10 çул ял администрацийĕн пуçлăхĕнче тăрăшнă. Ку вăхăтра поселенинчи пур ялсене те газ кĕрттернĕ, Шĕпекечпе Шуркасси ялĕсене Пысăк Упакассипе шоссе çулĕпе çыхăнтарнă. Чун ыйтни, юрă, яланах юнашар пулнă. Упакасси ялĕнче тĕрлĕрен конкурссене пуçаракан пулнă: «Професси енчен чи пултаруллисем», «Чи хăтлă кил», «Ăста пахчаçă», «Чи илемлĕ урам» тата ытти те. Район тата республика пĕлтерĕшлĕ мероприятисен йышĕн шучĕ те çук!

– Пур çĕрте те ăсталăх тупма пулать. Çынсене хисеплемелле, юратмалла. Этем пурне те çын валли тăвать. Хăв ырă пулсан, çав ырă хăвнах таврăнать, – çапла шухăшлать юбиляр, руководитель пулнă çын, лектор-пропагандист, агитатор тата учитель, лайăх этем, юлташ, вашават анне, кăмăллă мăшăр, юратнăскер.

Манăн тĕлĕнтермĕш мандолинăна курас килчĕ: «Ăçта сирĕн шăпаллă мандолина?» – «Вăл – пирĕн çемьен йăхран-йăха пыракан реликви. Унăн кашни струни сасси – асамлăх, юрату, асаилӳ» – пăшăлтатать мандолинистка.

Юрату сасси, асамлă мандолина кĕвви сирĕн чĕрере тата нумай çул хушши хуçалантăр, хисеплĕрен те хисеплĕ Елена Васильевна, юбилей ячĕпе сире. Пурнăçра чи пысăк хисеп вăл – чун юрри пурри. Вăл пур сирĕн, малалла та пултăр...

***Р. ЕВГРАФОВА.***



# ЛИЦЕЙ ВУНĂ ÇУЛТА

**Иртнĕ шăматкун, юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче, Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта лицеистсен «çарне» çĕнĕ йыш хушăннă ятпа савăнăçлă мероприяти пулса иртрĕ. Çак чаплă уява йĕркелесе ирттерекенĕ И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн Йĕпреçри представительствин ертӳçи, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Р. В. Яковлева пулчĕ. Ăна пулăшаканĕсем, паллах ĕнтĕ, 10-мĕшпе 11-мĕш классенчи лицеистсем тата вĕсен класс руководителĕсем – Н. Н. Тарасова тата М. В. Чернова.**

Лицей класне кăçал вĕренме кĕнĕ ачасене саламлама хисеплĕ хăнасем те килсе çитнĕ. Район пуçлăхĕ Анатолий Иванович Петров, ЧПУ доценчĕ, физикăпа математика наукисен кандидачĕ Анатолий Саматович Сабитов, ЧПУ студенчĕсен «Ульяновец» хаçачĕн тĕп редакторĕ Лидия Ивановна Филиппова, йышăну комиссийĕн техникăлла секретарĕ Василиса Васильевна Иванова (вăл Хумри Ишек ялĕнче çуралса ӳснĕ).

Чи малтанах тĕлпулăва пуçтарăннисене ЧПУ Йĕпреç районĕнчи представительствин ертӳçи Ритта Васильевна Яковлева çак шкул никĕсĕ çинче лицей уçнин историйĕпе кĕскен паллаштарчĕ, ку таранччен тунă çитĕнӳсем çинче чарăнса тăчĕ.

Çак шкулта лицей класĕ уçăлнăранпа вунă çул çитрĕ. Ку тĕлпулу – юбилейлă тĕлпулу. Çак тапхăрта лицейран 259 вĕренекен пĕлӳ илсе тухнă, выпускниксенчен 12-шĕ шкула ылтăн медальпе, тепĕр 39-шĕ кĕмĕл медальпе пĕтернĕ. Выпускниксенчен чылайăшĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕнĕ, ытларахăшĕ экономика, медицина, историпе филологи, строительство факультечĕсем суйласа илеççĕ. Техника факультечĕсенче пĕтĕмпе 61 çамрăк вĕреннĕ тата халĕ те вĕренеççĕ. Чаплă пĕлӳ паракан ытти аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕнисем те сахалăн мар. Йĕпреç лицеисчĕсем Мускаври сумлă университетсенче те пĕлĕвĕсене анлăлатаççĕ.

Юбилейлă тĕлпулăва лицеистсем тăрăшса хатĕрленни тӳрех сисĕнет. Сценари, пĕтĕмĕшле илсен, питех те интереслĕ пулса тухнă. Унта ачасен тĕрлĕ енлĕ пултарулăхне курса хаклама май килчĕ. Илемлĕ пултарулăх номерĕсем уйрăмах тыткăнларĕç курса ларакансене. Йĕпреçри ача-пăчасен искусство шкулĕн преподавателĕ С. Д. Романова хатĕрленипе хореографи уйрăмне çӳрекен воспитанниксем лартса панă ташăсем мĕне тăраççĕ! Киленмелĕх пур вĕсене пăхса.

Уява пуçтарăннисен умĕнче хăнасем сăмах илчĕç. Район пуçлăхĕ А. И. Петров Йĕпреç тăрăхĕнче çавăн пек лицей класĕ пурри ытларах пĕлме, тарăнрах пĕлӳ илме ăнтăлакан ачасемшĕн питех те кирлĕ пулнине палăртрĕ. А. С. Сабитов доцент çамрăк лицеистсене вĕренӳре питĕ лайăх ĕлкĕрсе пыма, ĕмĕттĕллевсене çитсе пыма ырлăх-сывлăх сунчĕ. Чи çутă ĕмĕтсенчен пĕри вара лицеистсен çакă вĕсем хăвăртрах шкул пĕтерсе республикăн чи сумлă вĕренӳ заведенийĕн – Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем пулса тăрассишĕн çунаççĕ. Çамрăксем аслă пĕлӳ патне туртăннине ырламалла кăна. Л. И. Филипповапа В. В. Иванова та лицеистсене çĕнĕ çитĕнӳсем сунчĕç, студентсен «Ульяновец» хаçачĕпе халех çыхăну тытма сĕнчĕç.

Вĕренекенсемпе ашшĕ-амăшĕсен канашĕ лицей класне пĕлӳ паракан чи пултаруллă педагогсен пĕр ушкăнне лицей мухтавне çĕкленĕшĕн, ачасене тарăн пĕлӳ парас ĕçе пысăк тӳпе хывнăшăн ятран туса хатĕрленĕ грамотăсем парса чысларĕ. Ашшĕ-амăшĕсем музыка парни те хатĕрленĕ, вĕсем юрланă кулăшла юрă пурин кăмăлне те кайрĕ. Çак кун лицеистсен адресĕпе нумай ăшă сăмах янăрарĕ. Вĕсен йышне кăçал çĕнĕрен хушăннă тепĕр 27 вĕренекеншĕн ку уяв ĕмĕр асăнмалăх юлĕ.

***С. БЫКОВА.***

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *ЧПУн Йĕпреçри представительствин руководителĕ Р. В. Яковлева лицеистсемпе.*

***Л. ФИЛИППОВА сăнӳкерчĕкĕ.***

# КАНУ КАÇĔ ИРТРĔ

Чăваш Тимеш ялĕнчи культура çуртĕнче кану кунĕсенче ялти çамрăксем ылтăн кĕркуннене халалласа конкурс йĕркелерĕç. Ăна клуб директорĕ Надежда Радюкова тата пултарулăх ертӳçи Оксана Ягодова ертсе пычĕç. Темĕн тĕрлĕ интереслĕ ăмăрту-тупăшу витĕр тухрĕç. Конкурса хутшăнакансем: пахча хуралçи – катемпи – турĕç, унпа ташă ташларĕç. Панулми хуппине чи вăрăм тата çӳхе касас енĕпе Валентина Козлова мала тухрĕ. Анжела Данилова хăйĕн хăюллăхĕпе палăрчĕ. Йывăç, панулми сăмахсене усă курса хăйсен пурнăçĕ çинчен юмах калама вăхăт çитрĕ. Ку конкурсра пуринчен маттурри Аня Ивашкина пулчĕ. Пĕтĕмлетӳсене тишкернĕ хыççăн «Кĕрхи бала» уçма Валентина Козлова тивĕçрĕ. Чăнахах та вăл питĕ хастар, питĕ маттур пулчĕ. Бал пики хăйне валли «мăшăр» суйларĕ. Çак чыса Виталий Козлов тивĕçрĕ. Бал патшипе унăн пике-мăшăрĕ ташă каçне пуçласа пачĕç. Çак савăнăçлă уява хутшăннисене асăнмалăх парнесемпе чысларăмăр. Çамрăксем кану каçĕпе кăмăллă юлчĕç.

***Алена КОРНИЛОВА,***
***çамрăксемпе ĕçлекен специалист.***


## КОЛХОЗ ИМ. ИЛЬИЧА

**продает населению навоз:**

**– с погрузкой и доставкой на ГАЗ-53 – 1100 рублей;**

**– с погрузкой на личный автомобиль такой же марки – 800 рублей;**

**– с погрузкой и доставкой на КАМАЗе – 2000 рублей;**

**– с погрузкой на автомобиль КАМАЗ покупателя – 1700 рублей.**

**Телефоны для справок: 2-72-23, 2-72-37, 89063811557.**


**ПРЕЗИДЕНТ ПРОГРАММИ**

**Чăваш Республикин Президенчĕн Николай Федоровăн «Чăваш республикин автомобиль çулĕсене тăвассине хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли мерăсем çинчен» Указĕ тухнă хыççăнах пирĕн республикăра çул-йĕр тăвас ĕç çĕнĕ хăватпа аталанса кайрĕ. Влаçра ларакансем ял проблемисем вĕсемшĕн çывăх пулнине, çав йывăрлăхсене татса пама тăрăшнине тепĕр хут ĕнентерсе пачĕç. Республикăри кашни яла асфальт е чул сарса хытарнă çул туса çитермелле, çакă ял халăхĕн пурнăçне çăмăллатĕ.**



# ПĔЧĔК ЯЛСЕМ ПЫСĂК ÇУЛПА ÇЫХĂНАÇÇĔ

Çĕнĕ çулсем тума тата хута яма тытăннăранпа çакна курса савăнатпăр: ял урамĕсем çул хывăннипе сарлакарах та илемлĕрех курăнаççĕ. Указа пурнăçлассипе çыхăннă ĕçсене ЧР хула строительстви тата обществăлла инфраструктурăна аталантарас министерствăн Чăваш Республикинчи «Чăвашавтодор» патшалăх унитари предприятийĕн Йпреç районĕнчи çул-йĕрпе юсав тата строительство управленийĕ те активлăн хутшăнать. Кăçал çак таранччен район территорийĕнче тунă тата хута янă çулсем çинчен калас пулсан, сахал мар ĕç тунине палăртмалла. Иртнĕ çулсемпе танлаштарса пăхсан, 2005 çулта 2,73 çухрăм, 2006 çулта 2,83 çухрăм çул тунă пулсан, 2007 çулта ку таранччен – 12,728 çухрăм чухлĕ автоçул тунă, кунсăр пуçне çул-талăк вĕçленичченте тепĕр 6,5 çухрăм хута каймалла.

Йĕпреçри çул-йĕрпе юсав тата строительство управленийĕ кăçал Костер ялне çити 1,2 çухрăм чухлĕ (4905,792 пин тенкĕлĕх) 4-мĕш категориллĕ çул туса пĕтерсе ĕçе кĕртрĕ.

Сехнер – Ирçе Çармăс – Липовка – Чăваш Çармăс çула 2 çухрăм чухлĕ тăснă, 4-мĕш категориллĕ çул туса пĕтерсе хута янă. Çу кунĕсенче Кĕлĕмкассинчен Мереçене 3 çухрăм чухлĕ çул хывнă, ăна республика кунĕ тĕлне хута ятăмăр. 16831, 683 пин тенкĕ тăкакланă. Анчахрах Анатрияла хывнă çула уçрăмăр, кунти 1 çухрăм та 315 метр чухлĕ тăсăлакан çула тума 9109 пин тенкĕ расхутланă. Пĕчĕк Патăрьелне кĕме çур çухрăма тăсăлакан çĕнĕ çул тунă, кунта 4 млн. ытла тенкĕлĕх ĕçсем тунă. Çывăх вăхăтрах çĕнĕрен хывнă ытти çулсем хута каймалла; Çĕнĕ Кĕлĕмкассине – 2,1 çухрăм (16106 пин тенкĕлĕх), Красная Заря поселокне – 0,5 çухрăм (3,500 пин тенкĕлĕх), Спотар поселокне – 1,5 çухрăм (11,236 пин тенкĕлĕх).

Паянхи кун тĕлне кăçалхи задание 80 процент пурнăçланă.

Пирĕн предприяти çул-йĕр тăвас енĕпе калкал ĕçлесе пынине кура ăна хушма ĕçсем те шанса пачĕç. Нумаях пулмасть-ха Чăваш Тимешрен Ленинкасси поселокне çити çул тума тытăнтăмăр. Çак хытарнă çул виçĕ яла сыпăнтарĕ, вăл 2,4 çухрăм чухлĕ тăсăлать, ăна тума пĕтĕмпе 18,500 пин тенкĕ уйăрнă. Паянхи кун тĕлне кунта 7 млн. ытла тенкĕлĕх ĕç тунă. Кивĕ çулсене тĕпренех юсаса çĕнетес ĕçсене те пире шанса панă. Ку çул эпир Хурамалти вăтам шкул патне çитиччен тепĕр 700 метр чухлĕ асфальт çул турăмăр, кунта расхутланă укçа-тенкĕ сумми 3962,572 пин тенкĕпе танлашрĕ. Ку объекта çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕлне, авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне, хута ятăмăр.

Çăкалăх поселокне каякан çула, 2,1 çухрăм тăршшĕне, юсаса çĕнетнĕ, 5226,1 пин тенкĕ тăкакланă. Тата ытти нумай вак-тĕвек ĕçсене пурнăçланă.

Йĕпреçри çул-йĕрпе юсав тата строительство управленийĕ хăйĕн производство хăвачĕсене çулсеренех ӳстерсе пыма тăрăшать. Нумаях та пулмасть асфальт саракан ДС-143 маркăллă техника кӳрсе килтĕмĕр эпир, çакă пире ĕç пахалăхне ӳстерме май пачĕ. Асфальтпа битум заводĕнче реконструкци тунă хыççăн унăн ĕç калăпăшĕ палăрмаллах лайăхланчĕ, унччен пĕр сехетре 20 тонна асфальтпа битум хутăшĕ «пĕçерсе» кăларнă пулсан, халĕ çак заводран пĕр сехетре 50 тонна тухать. Автоçулсем çинчи пытăк-шăтăксене пахалăхлăн питĕрме май паракан хальхи вăхăтри тепĕр машина та туянтăмăр эпир, унпа ĕçлеме çын нумай та кирлĕ мар, 2 рабочи ĕлкĕрсе пыраççĕ. Çулсене çуллахи тата хĕллехи вăхăтсенче тирпейлесе-пăхса тăма тепĕр хăватлă техника хушăнчĕ пирĕн паркра – «Амкадор» погрузчик. Хамăрăн чукун çул тупикне юсаса янă, вăл халĕ тулли хăватпа ĕçлет.

Управлени вăйĕпе тăвакан çулсен пахалăхне тĕрĕслесе тăракан лабораторие çĕнĕ йышши оборудованисемпе пуянлатсах пыратпăр. Производствăри ĕç сыхлавне лайăхлатассипе те кулленех тимлетпĕр. Иртсе кайнă тапхăрта пирĕн управлени водителĕсем енчен çул-йĕр правилисене пăснă тĕслĕхсем те, ĕçре сусăрланнипе çыхăннă тӳнтерле фактсем те пулман. Иртнĕ кунсенче хамăрăн професси уявне кĕтсе илнĕ май, малашне те çаплах, кăлтăксемсĕрех ĕçлесе пыма тĕллевсем лартрăмăр эпир. Хамăр çине тиенĕ обязательствăсене тивĕçлĕ шайра пурнăçласа пыма шантарсах çапла калатпăр: ума лартнă плансене пурнăçлатпăрах. Çакна валли пирĕн шанчăклă та ăста кадрсем пур. Хальхи вăхăтра управленире 149 çын ĕçлет, пĕр работник пуçне 94,173 пин тенкĕлĕх ĕç тунă, ку вăл унччenхи çултинчен 49,5 процент ытларах пулнине пĕлтерет. Пирĕн рабочисем уйăхсерен вăтамран 10323 тенкĕ чухлĕ шалу илеççĕ. Çак кăтартусем те пире малашлăха шанчăклăн пăхма хавхалантараççĕ. Пирĕн ĕç халăхшăн, тăван Чăваш Еншĕн питех те усăллă пулнине чун-чĕрепе туйса тăратпăр эпир.

***В. КОЗЛОВ,***
***Йĕпреçри çул-йĕрпе юсав тата строительство управленийĕн директорĕ.***

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *Анатриял урамĕ халĕ çапла курăнать.*

# МЕЧТЫ СБЫВАЮТСЯ В «МЕЧТЕ»

**Для тех, кто любит и желает связать свою судьбу брачными узами, работает свадебный салон «Мечта», расположенный на 2 этаже торгового дома «Домо» /АДРЕС: п. Ибреси, ул. Энгельса, д. 41 «б»/. Именно здесь исполняются любые желания и мечты жениха и невесты. В салоне «Мечта» можно приобрести и взять на прокат свадебное платье, фату, туфли и т. д.**





## СВАДЕБНЫЙ САЛОН + ПАРИКМАХЕРСКАЯ

**НА ПРОКАТ И В ПРОДАЖЕ:**
**подвенечные платья /от 1000 до 4000 рублей/;**
**вечерние платья, детские праздничные наряды /от 100 до 600 рублей/;**
**свадебные аксессуары.**

**В «МЕЧТЕ» РАБОТАЕТ ПАРИКМАХЕРСКАЯ.**
**Оригинальные прически – невестам и женихам.**
**А также приглашаются все, кто желает изменить свой имидж. Цены умеренные. Тел.: 2-18-90.**

Свет да Любовь

**Часы работы салона «МЕЧТА»:** **ежедневно: с 10 до 18 час. суббота: с 9 до 14 час. воскресенье — выходной.**

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

Надежного спутника семьи – любимого мужа, отца, заботливого дедушку, дорогого и близкого человека, опору наших семей **МИРОНОВА Всеволода Семеновича** (д. Ширтаны) от всей души, сердечно поздравляем с юбилеем, 60-летием!

За делами, за работой пролетели годы,
Были радости, заботы, были и невзгоды.
Но сегодня пожелаем мы о них забыть,
Добрым и здоровым долго-долго жить.
Желаем радости и счастья,
Здоровья крепкого вдвойне.
Желаем самого простого –
Прожить подольше на земле.

***ЖЕНА, ДЕТИ, ВНУКИ, СВАТЬЯ, СЕМЬЯ АСАНОВЫХ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Хаклă хĕрĕме, юратнă йăмăка, ырă кăмăллă та тараватлă аппана – Йĕпреçре пурăнакан **Ираида Борисовна МАКСИМОВАНА** – пĕтĕм чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе çуралнă кун ячĕпе – 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр, пурнăç çулĕ тăрăх ӳлĕмрен те маттуррăн утма, ĕçре çитĕнӳсем тума, кил-йышра телей-савăнăç кăна курма, хамăр çемьесем хушшинчи туслă çыхăнăва çирĕплетсех пыма, вăрăм та ăраскаллă ĕмĕр пурăнма хурçă сывлăх, иксĕлми вăй-халпа тивлетлĕх сунатпăр.

Пул ялан хавас та ырă,
Ан пĕлсем чир-чĕр мĕнне.
Чунупа пул ĕмĕр çамрăк,
Телейпе пĕрле çӳре.

***АМĂШĔ, ЭЛЬВИРА аппăшĕпе унăн мăшăрĕ АНАТОЛИЙ тата вĕсен НАДЯ, ФЕДЯ, НАСТЯ ачисем.***

## САЛАМЛАТПĂР

Чĕвĕлти чĕкеç пек çепĕç кăмăллă, ырă чун-чĕреллĕ çыннăмăра, хисеплĕ вĕрентекенĕмĕре, куллен-кун ачасене тарăн пĕлӳ, воспитани паракан хаклă çыннăмăра, Чăваш Тимеш шкулĕнчи **Зинаида Алексеевна СЕНЦОВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе хĕрӳллĕн те ăшшăн саламлатпăр. Ӳлĕмрен те ĕçре ăнăçуллăн ĕçлеме, ĕмĕттĕллевсене çитсех пыма ырлăх-сывлăх, çĕнĕрен те çĕнĕ вăй-хал, тивлетлĕ те юратуллă кун-çул, иксĕлми телейпе тулнă пурнăç сунатпăр.

Эсир панă уроксем асрах юлаççĕ,
Манмастпăр нихçан та вĕсене.
Сире пурте, пурте тав тăваççĕ,
Эсир – пирĕн иккĕмĕш анне.
Пурнăç çулĕ тăрăх утнă чух
Сирĕнтен хакли никам та çук.

***3-мĕш класра вĕренекен КОРНИЛОВ, ВАСИЛЬЕВ, ВОРОБЬЕВ, ЯКОВЛЕВ, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем.***

**x x x**

Çут тĕнчере хĕвелтен те çутăраххи, пурнăçра аннерен те ăшăраххи тек кам пур-ши! Хамăра кун çути панă, юратса пăхса ӳстернĕ, телей пиллесе пурнăç çулĕ çине кăларнă хаклă аннемĕре, кăмăллă кукамай-асаннене, хисеплĕ хунямана – Чăваш Çармăс ялĕнчи **Анна Спиридоновна АКШАРОВАНА** – сумлă юбилей ячĕпе, юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче килнĕ 75 çулхи юбилейĕпе хĕрӳллĕн саламлатпăр, вăрăм ĕмĕр, телейлĕ кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Ылтăн пек ыр çыннăмăр, анне,
Эс салхуллă ан пул ĕмĕрне.
Ăшшăн-ăшшăн кулса кĕтсе ил эс пире,
Телейпе, сывлăхпа эс çитсемччĕ 100е!

***ХĔРĔСЕМ, ЫВĂЛĔСЕМ, КĔРӲШĔСЕМ, КИНĔСЕМ, МĂНУКĔСЕМ.***

КОНКУРСЫ ПРОДОЛЖАЮТСЯ

## АДМИНИСТРАЦИЯ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА

сообщает, что региональная общественная организация «Ассоциация женщин-предпринимателей Чувашии» совместно с Минэкономразвития Чувашии проводят республиканский этап Всероссийских конкурсов:

«Женщина – директор года»,
«Молодой директор года»,
«Рабочая честь России».

Пакеты документов и условия проведения конкурсов размещены на сайте Минэкономразвития Чувашии по адресу: **www.economy.cap.ru.**

Конкурсные документы принимаются до 1 декабря 2007 г. включительно в администрации Ибресинского района в отделе экономики и управления имуществом, каб. 307, контактный телефон: 2-25-71.

## САЛАМЛАТПĂР

Пĕр-пĕрне савса пĕрлешнĕ, пурнăç çулĕпе юнашар утакан мăшăрăма, çемье хӳтĕлевçине, ачамăрсен савнă ашшĕне – Анатри Кĕлешкассинчи **Николай Иванович ИВАНОВА** – çут тĕнчене килнĕренпе 45 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чун-чĕререн юратса, ырă кăмăлĕшĕн, тараватлăхĕшĕн тав туса ăшшăн саламлатпăр. Тулăх кĕр кунĕ пек ытлă-çитлĕ пурнăç, тивлетлĕ кун-çул, ирхи сывлăм пек таса сывлăх сунатпăр.

***МĂШĂРĔ НАДЯ, ЫВĂЛĔСЕМ: АЛЕША, ДИМА.***

КИРЛĔ ПУЛĔ

## МĔНЛЕ ПĔЛТЕРМЕЛЛЕ?

**«Эпĕ пушар тухнине асăрхарăм, кĕсъере телефон пур пулин те ăçта, мĕнле шăнкăравласа пĕлтермеллине пĕлеймерĕм. Çакăн çинчен хаçатра ăнлантарса параймăр-и?»**

**Редакци вулаканăн çак ыйтăвĕ çине патшалăх пушар надзорĕн Йĕпреç районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхне Николай Сергеевич ПРОКОПЬЕВА хуравлама ыйтрĕ.**

Ака мĕн пĕлтерчĕ вăл:

– Пушар пирки эсир пур чухне те тенĕ пекех 010 номерпе пĕлтерме пултаратăр. БиЛайн, МТС, Чувашия Мобайл (ON) операторсен пулăшăвĕпе усă куракансене Шупашкарти диспетчер хурав парĕ. Мегафон, СМАРТС операторсем пулăшнипе Йĕпреçри диспетчерпа çыхăнма май килĕ. Мегафонпа усă куракансен 010101 номерпе пулăшу чĕнмелле. Çавăн пекех 8 (238) 2-14-83 номерпе шăнкăравласан та пĕрлехи диспетчер службин операторĕпе çыхăнма пултаратăр. Çавăн пекех 112 номерпе мĕнпур оператор урлă васкавлăн пулăшу ыйтса инкек пирки пĕлтерме пулать. Çул çинчи инкекре те çак номерсемпех пулăшу ыйтмалла.

Тата çакна асра тытăр: хыпар пĕлтернĕ чухне тӳрех хăш районта, мĕнле ялта, хăш урамра, миçемĕш çуртра инкек пулни çинчен тĕрĕс, уçăмлăн, хыпаланмасăр пĕлтерĕр. Хăвăрăн хушамата, ята туллин калăр. Диспетчерпа тавлашăва ан кĕрĕр, вăл мĕн ыйтнине тĕрĕс те кĕскен хуравлăр. Çул çинче пулма пултаракан чăрмавсем çинчен те асăрхаттарăр.

Тĕслĕхрен: «Йĕпреç районĕ, Кĕлĕмкасси ялĕ, ——— урамĕ, № çурт. Хыпара пĕлтерекенĕ – Иванов Иван Иванович. Çунакан çурт патне маларахри урамран кĕмелле, мĕншĕн тесен çав-çав урам тăрăх кайма çук, çул урлăшпех бетон плитасем выртаççĕ».

Çапла хыпарланă самантрах инкек пулнă вырăна пушар машини, васкавлă пулăшу тата милицин ятарлă ушкăнĕ çула тухаççĕ. Диспетчер ыйтăвĕсене хуравлани вăхăта ирттерет, пулăшу кая юлса тухать тесе шутлани тĕрĕс мар, сиртен ыйтса пĕлнине диспетчер çула тухнисене кайрантарах раципе е телефонпа хыпарлать. Пулăшу, çăлав ĕçĕсене ăнăçлă йĕркелеме май парать çакă. Эппин, сайра-хутра кирлĕ пулакан телефон номерне хăвăр мобильник çине кĕртме васкăр, кирлĕ пулĕ.

**ООО «ИБРЕСИНСКИЙ ХЛЕБОЗАВОД»**
**требуется на работу газооператор.**
**Обращаться в отдел кадров райпо. Телефон: 2-29-62.**

**801. ПРОДАЕТСЯ а/м «Шевроле-Нива» 2005 г. в., цвет бордовый. Тел.: 89033466474.**

**812. ПРОДАЕТСЯ ВАЗ-21074, 2000 г. в., цвет красный, в хорошем состоянии. Т.: 89278525809.**

**807. ПРОДАЕТСЯ кирпич одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный, керамзит, цемент. Тел.: (8352) 52-74-29, 89033582191.**

**809. ПРОДАЕТСЯ дом в д. Кошмас-Тойси. Тел.: 2-12-04 (раб.), 89278556462.**

**810. ПРОДАЕТСЯ а/м ВАЗ-2110 2001 г. в., цвет красный, небитый, литые диски, спорт. подвеска и сиденья, 16 клап., инжектор. Тел.: 89603091987.**

**811. ПРОДАЕТСЯ 1-комн. квартира в п. Ибреси по ул. Мира, 29, кв.4, 37 кв. м, 2-й этаж, 360-370 тыс. руб. Тел.: 89030648680, 89266198564.**

**815. Молодая семья СНИМЕТ квартиру. Т.: 89093048769.**

**КРЕДИТНОМУ КООПЕРАТИВУ**
**ТРЕБУЕТСЯ зав. отделением: женщина 30-40 лет, желательно в/о, знание ПК. Обращаться по тел.: (8352) 61-00-26, 89278482077.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

***Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.***

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

**Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР**

**Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6**

**ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП “Вурнарский издательский дом”: 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.**

**Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.**

**Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП “Вурнарский ИД”. Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3291 чув. – 2418, русск. – 873. Зак. №**

**Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком ®**
**Срок сдачи в печать — 17.00**
**Сдан в печать в 10.00**

**Ответственный за выпуск Быкова С. В.**